## Иксёлми хавхалану

Филипп Лукин... Çак ят Раççей культурин юрă ӳнерĕнче Тихон Хренников, Анатолий Новиков, Матвей Блантер, Серафим Туликов, Назиб Жиганов, Александра Пахмутова ячĕсемпе юнашар тăрать. Хăйĕн пуян та нумай енлĕ, ĕçлĕхлĕ ĕмĕрĕнче Филипп Миронович сакăр çĕр ытла юрă çырчĕ, вăл юрăсем халăхăмăра нимеллĕ ĕçре те, канура та, уяв кунĕсенче те, вăрçă çулĕсенче те яланах хавхалану кĕртсе тăчĕç. Музыка енĕпе Федор Павловран, Василий Воробьевран, Степан Максимовран пил илсе юлнăскер, каярахпа совет тапхăрĕн паллă композиторĕпе Исаак Дунаевскипе çыхăну тытса ĕçленĕскер, Филипп Лукин хăйĕн мĕнпур талантне, хастарлăхĕпе пултарулăхне наци культурине аталантарас ĕçе хыврĕ.

Пулас композитор Красноармейски районĕнчи Çавалçырма ялĕнче 1913 çулхи утă уйăхĕн 3-мĕшĕнче çуралнă. Ункă шывĕ хĕрринчи йăмраллă та улмуççиллĕ ялсен юрри-кĕвви, халăх сăмахлăхĕ, чун пуянлăхĕ унăн чĕрине ачаллах кĕрсе вырнаçнă.

Чатукассинче, Ишекре пĕлӳ илнĕ хыççăн вăл Шупашкарти музыка техникумĕнче вĕреннĕ, унтан Мускав консерваторийĕнче аслă пĕлӳ илнĕ. Республикăри юрăпа ташă ансамбльне, Чăваш патшалăх филармонине, Композиторсен союзне нумай çул хушши ăнăçлă ертсе пынипе пĕрлех вăл хăйĕн чун-чĕрери тĕп туртăмне — юрă-кĕвĕ хывассине — мĕн ĕмĕр тăршшĕпех хавхаланулăн та пуçаруллăн туса пычĕ. Филипп Лукин кĕвĕленĕ «Çамрăксен юрри», «Шурă роза», «Салам, Мускав», «Тăван хула», «Çĕршывăм, савăн»,

«Сирень», «Çĕр-планета чĕнет», «Уçланкăри палан», «Шупашкар» тата ытти нумай-нумай юрăсем халĕ ылтăн çӳпçере упранаççĕ, культурăн чăн-чăн пуянлăхĕ пулса тăраççĕ.

СССР Патшалăх премине, Раççей халăх артисчĕн, Чăваш тата Дагестан республикисен тава тивĕçлĕ искусство ĕçченĕн ятне, тăвата ордена тивĕçнĕ паллă композитор яланах тăван халăхпа алла-аллăн утнă, республикăн халăх депутачĕ, СССР тата Раççей патшалăх премийĕсене паракан комисси членĕ, тĕрлĕ жюрисен ертӳçи пулнă, халăх шанăçне яланах туллин тӳрре кăларса пынă. Филипп Лукин нумай-нумай çул хушши Ф.П. Павлов ячĕллĕ музыка училищин хорпа дирижер уйрăмне ертсе пынă, вуншар та çĕршер ăста специалист хатĕрлесе кăларнă.

Ф.М. Лукин пирĕнтен 1994 çулхи нарăс уйăхĕнче уйрăлса кайрĕ.

Культура каçалăкĕнче нумай çул хушши пĕрле ĕçлесе пынă май манăн çакна палăртас килет: Филипп Миронович пирĕншĕн аслă юлташчĕ, хăйĕн анлă тавра курăмĕпе, сăнавĕ-канашĕпе пире пулăшса пыратчĕ, пĕрлехи ыйтусене татса панă чухне хăй шухăшне татăклăн та уçăмлăн калатчĕ, тĕрĕслĕхе хăюллăн хӳтĕлетчĕ, чăн-чăн искусство халăх пултарулăхĕ çинче никĕсленсе тăмаллине яланах асра тытма вĕрентетчĕ.

Çак уйăхра пирĕн ятлă-сумлă композиторăмăр çуралнăранпа 90 çул çитет. Ман шутпа, унăн юррисем пирĕнпе пĕрле пулни паллă юрă ăстин çутă таланчĕ пирĕнте пурăннине пĕлтерет. Çав ятпа вăл çуралса ӳснĕ Красноармейски районĕнче те, республикăпа унăн тулашĕнче те нумай ĕç-пуç ирттеретпĕр, юрăçсен Ф. Лукин ячĕллĕ фестивалĕ те пулать, юпа уйăхĕн 17-мĕшĕнче вара Чăваш патшалăх операпа балет театрĕнче халăхăн юратнă композиторĕ çуралнăранпа 90 çул çитнĕ май уяв концерчĕ пулать. Унта наци искусствин чи паллă ăстисемпе пĕрлех халăх коллективĕсем, хăнасем хутшăнаççĕ.

Халăхшăн пурăннă çыннăн ырă ячĕ халăх чĕринче.

*Ольга Денисова*,
Чăваш Республикин культурăпа
наци ĕçĕсен министрĕ.

Ялав, 2003. Утă уйăхĕ, 7 №.